"Радиохум – хаçат страницинче. Ыйту пур. Хуравне пĕлесшĕнччĕ"

Ача пособийĕсем пиркиех

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

– Ку тĕлĕшпе паян-ыран лару-тăру тата та лайăх енне улшăнма кирлĕ. Çапла вĕт?

– Кăçалхи апрелĕн 20-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕн "Ача пур граждансене хушма социаллă пулăшу парасси çинчен" Указĕ тухрĕ. Майăн 1-мĕшĕнчен вăя кĕчĕ вăл. Унпа килĕшӳллĕн ачашăн уйăхсерен паракан пособие илекенсен йышĕ татах та ӳсмелле. Асăннă Указпа килĕшӳллĕн ачашăн уйăхсерен паракан пособие вăтам тупăшлă çемьери кашни çын пуçне пурăнмалли чи пĕчĕк шайран (паян вăл 3069 тенкĕпе танлашать, асăннă виçе кашни кварталтах улшăнса тăрать) иртсен те параççĕ, енчен те çемьери кашни çын пуçне тивекен тупăш пурăнмалли чи пĕчĕк шайăн 150 процентĕнчен иртмест пулсан.

– Малтан хĕрарăмсене ачана çулталăк çурăччен пăхнă хушăра 500 тенкĕпе мĕнле пурăнмалла-ши текен шухăш та сехĕрлентернĕн туйăнатчĕ. Патшалăх паян çак йывăр шухăша та сирчĕ.

– Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ачана çулталăк çурăччен пăхма паракан пособи пĕрремĕш ачашăн 1,5 пин тенкĕпе танлашрĕ. Иккĕмĕш е малаллахи ачасемшĕн вăл 3 пин тенкĕ пулать. Ку вăл ĕçлемен ашшĕ-амăшĕшĕн. Ĕçлекенсен вара çак виçе ĕç укçин 40 проценчĕ чухлĕ е 1,5 пин тата 3 пин тенкĕрен кая пулмалла мар, 6 пин тенкĕрен иртмелле мар.

Палăртмалла, асăннă пособие социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă ĕçлемен ашшĕне е амăшне, е опекунсене параççĕ. Çакăн пек те пулма пултарать: амăшĕ ĕçлет, ашшĕ ĕçлемест пулсан, ашшĕне параççĕ çак пособие, енчен те вăл ачана çулталăк çурăччен пăхма паракан отпуска хăй илет пулсан.

Тепĕр тĕслĕх. Ачан ашшĕ те, амăшĕ те ĕçлеççĕ. Ачана асламăшĕ пăхас кăмăллă çулталăк çурăна çитиччен. Енчен те асламăшĕ ĕçлет пулсан, ăна ачана çулталăк çурăна çитиччен пăхма паракан пособие унăн ĕç вырăнĕнчен тӳлеççĕ. Енчен те асламăшĕ ĕçлемест пулсан, ăна нимĕнле пособи те тухмасть. Кунта ачана çулталăк çурăччен пăхма паракан пособие амăшĕн е ашшĕн илес пулать.

– Нина Пантелеевна, хаçат вулакансене ача çуралсан пĕр хутчен паракан пособие парас йĕркери улшăнусемпе паллаштарсан та аван пулмалла.

– Асăннă пособие малтан ача çуралсан çеç панă пулсан, кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çак çăмăллăха илекенсен йышĕ те ӳсрĕ. Пĕр хутчен паракан çак пособие (халĕ вăл 8 пин тенкĕпе танлашать) ача çуралсан çеç мар, ачана ăсрава илсен те, опекăна илсен те, çемьене пурăнма илсен те параççĕ. Юлашки çак виçĕ категорие кĕрекенсене ăсрава, опекăна, çемьене пурăнма илнĕ ачасем миçе çулта пулнине пăхмасăр параççĕ çак пособие. Хăть ача çулталăкра пултăр, хăть 13 çулта, енчен те ача 18 çул тултарман пулсан.

– Интернатра ачана мĕнле лайăх пăхаççĕ пулсан та, ачашăн çемьерен хакли çук.

–Çавăнпа та ачасем ача çурчĕсемпе интернатсенче мар, çемьесенче ӳсчĕр тесе çĕршыв Правительстви пысăк утăм турĕ. Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа хăр тăлăх ачасемшĕн паракан пособи виçисене ӳстерчĕ. Опекăна е çемьене пурăнма илнĕ ачашăн, вăл 2 çула çитмен пулсан, уйăхсерен 4 пин тенкĕ парать. Ача 2-7 çулсенче пулсан ку сумма 4160 тенкĕпе, 7–18 çулсенче пулсан 4570 тенкĕпе танлашать. Ку укçана ачана çитерме-тумлантарма, çемçе инвентарь илме уйăрать патшалăх.

Кунсăр пуçне кăçалтан пуçласа пурнăçа кĕме пуçланă тепĕр çĕнĕлĕх пур. Ачашăн тивĕçекен халь çеç асăннă суммăна панисĕр пуçне ачана çемьене пурăнма илекенсене ĕç укçи те тӳлеççĕ. Вăл мĕн чухлĕ пуласси миçе ачана çемьене пурăнма илнинчен килет. Енчен те пĕр е икĕ ачана çемьене пурăнма илсен, уйăхне 2500 тенкĕ тӳлеççĕ. 3 е ытларах ачана пурăнма илсен, ку сумма 3600 тенкĕпе танлашать.

Куратăр пулĕ, патшалăх паян ача çемье ăшшине туйса ӳстĕр тесе тăрăшать. Çакăн сăлтавĕ те паллă. Çемьере кăна ача пур енлĕ, тулли телейлĕ çитĕнет. Ку вара уннăн малашнехи пурнăçра çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа та районта пурăнакансен ку ыйту çине тимлĕрех пăхасчĕ. Тен, хăвăр ачăрсене çитĕнтернĕ хыççăн пӳрте ача сассипе илемлетес, хăвăр юратăва тепĕр ачана парас тетĕр, тархасшăн, килĕр социаллă хӳтлĕх е вĕрентӳ пайне. Пулăшатпăр. Тен, ниçта те ĕçлеместĕр, ачана тĕрĕс воспитани пама пултаратăр, çакна валли тивĕçлĕ условисем пур – хапăл тусах кĕтетпĕр. Республикăри вăл е ку интернатри ача, тен, паян шăпах сирĕн ăшша кĕтет. Патшалăх сире ку ĕçре, ав, пулăшать. Ырри вара ырăпах таврăнать.

– Ача ача садне çӳренĕшĕн тӳлессинче те паян патшалăх айккинче юлмасть.

– Ку çĕнĕлĕх те кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа пурнăçа кĕчĕ. Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн пĕрремĕш пепке ача садне çӳренĕшĕн тӳлекен суммăн 20 процентне каялла тавăрса параççĕ. Иккĕмĕш ачашăн çак çăмăллăх 50, виççĕмĕш ачашăн 70 процентпа танлашать.

– Нина Пантелеевна, сăмаха вĕçленĕ май мĕн хушса калана пулăттăр?

– Патшалăх паян çемьесене, ачасене пулăшма питĕ кирлĕ мерăсем йышăнать. Мĕншĕн тесен пирĕн пуласлăх – пирĕн ачасенче. Пирĕн район, республика, çĕршыв пуласлăхĕ мĕнле пуласси эпир паян хамăр тивĕçе мĕнле пурнăçланинчен нумай килет. Эпир хамăр ачасене тĕрĕс воспитани панинчен. Чăн-чăн çын тунинчен. Çавăнпа та ашшĕ-амăшĕсен хăйсен тĕп тивĕçĕ пирки пĕр самантлăха та манас марччĕ. Ачасене пурнăçа, çынсене, хăйсене юратма вĕрентсе ӳстересчĕ. Вĕсене ырă ĕçсем тума хăнăхтарасчĕ, пурнăçра йывăрлăхсене çĕнтерсе хăйсен вырăнне тупма пулăшасчĕ. Çапла пултăр тесе пур енлĕн тата тĕрĕс воспитани парасчĕ хамăр çуратнă, усрава, опекăна, çемьене пурăнма илнĕ ачасене. Вĕсем пирĕн ачасем пулнине асра тытса пурăнасчĕ.

– Тавах, Нина Пантелеевна, ăнланмалла тата интереслĕ калаçушăн.

Л. ПАВЛОВА калаçнă.

Тухтăр сĕнет

Çĕпĕр шĕвĕрĕлченĕ

Икĕ ĕмкĕчлĕ çĕпĕр (е кушак) шĕвĕрĕлченĕ 8-13 миллиметр пысăкăш лаптак хурт, сарлакăшĕ – 1-3 миллиметр, вĕсем кушаксен, йытăсен, сыснасен, тилĕсен, çынсен пĕверĕнче, ват хăмпинче тата хырăмай патĕнче пурăнаççĕ. Ку шĕвĕрĕлчен описторхоз текен чире пуçарать.

Чирлĕ çын вĕриленет, сылтăм аяк пĕрчи, чĕре ани сурнипе аптăрать. Унăн пуç ыратать, апат анми пулать, ăш лĕклентерет, хăсăк тухать, пĕвер, ват хăмпи пысăкланать. Куç шурри, çăвар маччи, хăш-пĕр чух пĕтĕм ӳт-тир саралать. Юн тытăмĕ улшăнать. Эозинофил текен юн çаврашкисен хисепĕ 80 процента çитме пултарать.

Икĕ ĕмкĕчлĕ шĕвĕр шĕвĕрĕлченĕн çăмартисем ват, хырăмлăхай парĕн сĕткенĕпе пĕрле пырша лекеççĕ, унтан каялла тухаççĕ. Вĕсем вара туалетсенчен пĕвене, кӳлле, юхан шыва лекеççĕ те тăварсăр шывра пурăнакан улитка ăшĕнче аталанаççĕ, улиткăран тухнă хыççăн хӳреллĕ личинкăсем карп йышши пулăсем ăшне кĕреççĕ. Шала кĕнĕ чух вĕсен хӳри татăлса юлать. Çав личинкăсем партас, чапак, çупах, хура карас, сазан, хĕрлĕ çунат тата ытти пулăсем ăшĕнче аталанаççĕ.

Лайăх пиçмен, ăшаланман, тăварланса çитмен пулла çисен çын та чирлеме пултарать. Ку чир паллисем пулă çинĕ хыççăн 2-4 эрнерен сисĕнеççĕ.

Описторхозран сыхланма çакна пĕлмелле:

1. Чĕрĕ пулăран хатĕрленĕ çурма фабрикатсене е чĕрĕ пулă фаршне, чĕрĕлле тăварланă пулăна кăшт та тутанса çисе пăхма юрамасть. Чирленĕ пулла холодильникра упрасан та унти çĕпĕр шĕвĕрĕлченĕсем сивĕпе пĕтеççĕ.

2. Пулăсене пĕчĕк татăксене касмалла.

3. Пулă яшки вĕреме кĕрсен те ăна тата 15-20 минут хушши пĕçермелле.

4. Пулăран тунă кукăльсене 45-50 минут хушши пĕçермелле.

5. Килти условисенче сивĕлле тĕтĕмлекен пулла малтан 3-4 эрне хушши тăварласа е шăнтса усрамалла.

6. Тăварланă пулла (пулă йывăрăшĕнчен 20 проценчĕ чухлĕ тăвар сапмалла) икĕ эрнерен тин çимелле.

7. Кушăхтаракан пулла малтан виçĕ кун хушши тăварласа, виçĕ эрне хушши çакса тăратмалла.

8. Шĕвĕрĕлченпе чирлĕ пулла выльăха çитерме юрамасть: килти йытăсене, кушаксене сиплемелле, хуçасăр, çапкаланса çӳрекен йытăсене пĕтермелле.

Çыннăн организмĕнче икĕ ĕмкĕчлĕ çĕпĕр шĕвĕрĕлченĕсем икĕ эрнерен ӳссе çитĕнеççĕ. Эмеллемесен вĕсем 20-25 çул хушши упранма пултараççĕ. Ку чиртен больницăра сиплеççĕ. Чирлĕ çынсем вара ĕмĕр тăршшĕпех пĕвер чирĕпе аптăраççĕ. Каярахпа вĕсен пĕвер ракĕ пуçланма пултарать.

Ку чирпе чирлекенсем пирĕн районта та пур. Апла пулсан кашнийĕнех харпăр хăйне тата пĕчĕк ачасене чир-чĕр ересрен кулен сыхламалла. Вăхăтра сиплесен, чир хăвăрт иртет, сывлăх та час çирĕплене çитет.

З. ПЕТРОВА,
Çĕнĕ Шупашкарти гигиенăпа эпидемиологи центрĕн районти пайĕн специалисчĕ.

Спорт хыпарĕсем

Майăн 5-мĕшĕнче Ярапайкасси шкулĕн стадионĕнче Михаил Лоцманов кубокне çĕнсе илессишĕн футболла выляссипе ăмăрту иртнĕ. Чи пултаруллă 3 команда хутшăннă унта. 1-мĕш вырăна Калайкасси шкулĕн команди тивĕçнĕ. 2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсенче – Чуманкассипе Ярапайкасси шкулĕсен командисем.

Майăн 9-мĕшĕнче Аслă Çĕнтерӳ кунне халалласа Владимир Шалтыков парнисене çĕнсе илессишĕн Муркаш – Уйкас Янасал маршрутпа велосипедистсем ăмăртнă. 7 команда хутшăннă ăмăртăва. Вăл шутра Шупашкар, Вăрмар, Муркаш районĕсен тата Тутарстан командисем. Командăсен ăмăртăвĕнче Ильич яч. хис. хуçалăх команди 1-мĕш пулнă.

Майăн 10-11-мĕшĕсенче Калайкасси шкулĕн стадионĕнче пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен командисем хушшинче çăмăл атлетика енĕпе çуллахи спартакиада ăмăртăвĕсем иртнĕ. Унта 350 спортсмен ытла хутшăннă.

Вăтам шкулсем хушшинче малти вырăнсене Калайкассисем, Муркашсем тата Орининсем, пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсем хушшинче Панклисем, Шомиксем тата Сосновкăсем пайланă.

Н.В. Никольский çуралнăранпа 129 çул çитнине халалласа **майăн 19-мĕшĕнче** кросс чупса «Хыпар» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн Шомик шкулĕнче уçă ăмăрту иртет. Унта пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсен, вăтам шкулсен тата предприятисемпе организацисен командисем вăй виçеççĕ.

Сосновкăра çав кунах «Хыпар» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн волейбол енĕпе те ăмăрту иртет. Вăл 9 сехетре пуçланать.

Н.В. Никольский ячĕпе хисепленекен Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул кунтан вĕренсе тухнисене шкул 120 çул тултарнине уявлама чĕнет.

Уяв шăмат кун – çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче – 10 сехетре пуçланать.

Шкул администрацийĕ.

Пĕлтерӳсем. Объявления

БЫТОВАЯ ТЕХНИКА
по оптовым ценам на заказ: телевизоры, холодильники, СВЧ-печи, стиральные машины, электроинструменты, пылесосы, мотоблоки и многое другое.
Тел.: 8-906-385-29-30. 4-8.

СПУТНИКОВОЕ ТЕЛЕВИДЕНИЕ
любой сложности, от 3000 рублей, с установкой. Триколор – 5000 руб.
Тел.: 8-906-385-29-30. 4-8.

РЕСПУБЛИКАНСКИЙ СОЮЗ КРЕДИТНЫХ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИХ КООПЕРАТИВОВ ГРАЖДАН
ПРЕДОСТАВЛЯЕМ КРАТКОСРОЧНЫЕ
ЗАЙМЫ
ПРИНИМАЕМ НА ХРАНЕНИЕ
СБЕРЕЖЕНИЯ
14 - 30 % годовых
Наше представительство в с. Моргауши филиал КПКГ "Агрокредит": ул. 50 лет Октября, д.23, тел. 2-18-13
Услуги предоставляются пайщикам кооператива

Продаю участок 40 соток под строительство на новой улице в д. Шептаки, газ, свет, водопровод проведены. Имеется погреб, недостроенное здание 6м.х11м. под гараж, летнюю кухню.
Тел.: 8-905-347-70-47.

Куплю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши.
Тел.: 8-927-853-54-21. 2-2.

Продаем керамзитобетонные блоки, цемент, шифер, рубероид, доски, кирпич. При покупке керамзитобетонных блоков на остальной товар скидки.
Тел.: 8-960-307-41-78, 8-927-851-47-82. 2-3.

Срочно продаю ВАЗ-21099 2001 г.в. Цвет голубой. Цена договорная. Тел.: 8-927-666-74-99.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии следующих свободных земельных участков к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на них, расположенных на территориях Ярославского и Шатьмапосинского сельских поселений Моргаушского района Чувашской Республики

№ п-п	Месторасположение земельного участка	Кадастровый номер участка	Целевое назначение	Площадь кв. м.
1.	Участок находится примерно в 360 метрах по направлению на северо-запад от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Лебедкино, ул. Садовая, д. 25.	21:17:15 05 01:0133	Для ведения личного подсобного хозяйства	6000
2.	Участок находится примерно в 620 метрах по направлению на юго-запад от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Авданкасы, ул. Комсомольская, д. 1.	21:17:28 04 01:0088	Для ведения личного подсобного хозяйства	6000
3.	Участок находится примерно в 635 метрах по направлению на юго-запад от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Авданкасы, ул. Комсомольская, д. 1.	21:17:28 04 01:0087	Для ведения личного подсобного хозяйства	6000

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии следующих свободных земельных участков к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на них, расположенных на территории Шатьмапосинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

№ п-п	Месторасположение земельного участка	Кадастровый номер участка	Целевое назначение	Площадь кв. м.
1.	Участок находится примерно в 663 метрах по направлению на юго-запад от ориентира ОМЗ-390, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Авданкасы.	21:17:28 04 01:0086	Для ведения личного подсобного хозяйства	6000
2.	Участок находится примерно в запад по направлению 280 метрах от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Обрыскино, ул. Молодежная, д. 15.	21:17:28 08 01:0056	Для ведения личного подсобного хозяйства	6400

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Муркаш район сучĕн коллективĕ кунта ĕçлекен Р.И. Тодинова амăшĕ
Ирина Ивановна ПОЗДЕЕВА
вилсе кайнă пирки çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ хуçалăхра нумай çул хушши вăй хурса ĕçленĕ
Эраст Константинович КОНСТАНТИНОВ
вилсе кайнă пирки çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Çатракассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта истори вĕрентекен Н.Г. Романован
ШĂЛЛĔ
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта апат-çимĕç пĕçерекенте ĕçлекен О.В. Казакован амăшĕ
Раиса Андреевна ЕФРЕМОВА
сарăмсăр вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĚНТЕРӲ ЯЛАВĚ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
Директор-главный редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3511
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 15.05.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.